Спорт хыпарĕсем

# Вăйлисенче – район пуçлăхĕн кубокĕ

Иртнĕ шăмат кун 11 сехетре Муркашсем «автан» кăшкăрнине илтмесĕр юлмарĕç пулĕ. Уçă сассипе пурне те район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртма йыхравларĕ вăл. «Йытăпа» «кушак» та, «чăхă» та сывă пурнăç йĕркине тытса пыма сĕнсе кашни хăйĕн чĕлхипе, анчах та пурне те ăнланмалла калаçрĕç. Çапла хаваслăн пуçланчĕ спорта юратакансен уявĕ.

Ăмăртăва пуçтарăннисене малтанах район пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов саламласа тăрăшулăхпа мал туртăмлăх кăтартма сунчĕ, кашниншĕнех спортпа туслă пулни пĕлтерĕшлине палăртрĕ. Муркаш районĕн йĕлтĕр спорчĕн федерацине ертсе пыракан П.Н. Вязов, Шупашкарти Муркашсен ентешлĕхне ертсе пыракан А.И. Федотов, ытти хăнасем каланă сăмахсем те йĕлтĕрçĕсен кăмăлне хăпартрĕç.

Икĕ арçын тата икĕ хĕрарăмран тăракан командăсем йĕлтĕр эстафетине хатĕрччĕ, стартчен юлнă вăхăтра вĕсем тренировкăсем туса ирттерчĕç. Пурĕ вара 54 команда пуçтарăнчĕ стадионта.

Чи малтан старта учительсен командисем тухрĕç. Хĕрарăмсем – икĕ километрлă, арçынсем 3 километрлă дистанцисене тапхăрсемпе кайрĕç. Финиша Калайкассинчи вăтам шкул команди пĕрремĕш çитрĕ. Иккĕмĕш – Муркашри вăтам шкулти, виççĕмĕш – Йӳçкассинчи вăтам шкулти учительсен командисем.



Ял тăрăхĕсен тата район администрацийĕн пайĕсен командисем хушшинчи кĕрешӳ кăçал та пĕлтĕрхи призерсем хушшинчех хĕрӳ иртрĕ. Тăвată тапхăр хыççăн мала çапах та районти шалти ĕçсен пайĕн команди тухрĕ. Пĕлтĕр вĕсем иккĕмĕш пулнăччĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕн спортсменĕсем вара пĕлтĕр çĕнсе илнĕ кубока алран вĕçертсе иккĕмĕш вырăна тухрĕç. Виççĕмĕшсем – Муркаш ял тăрăхĕн спортсменĕсем.

Ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен командисем ăмăртнине сăнама интереслĕ пулчĕ. Вĕсен хушшинче Муркашри чăх-чĕп фабрикин команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ. «Свобода» хуçалăх 2-мĕш, «БТИ» предприяти 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕç.

VIP-чупăва хутшăнакансем хушшинче арçынсем ытларахчĕ. Вĕсем хушшинче вара çил пек вĕçтерсе Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров финиша чи малтан çитрĕ. «Сывлăх» ФСК директорĕ А. Куликов – иккĕмĕш, В. Михайлов предприниматель – виççĕмĕш вырăнсенче. Хĕрарăмсем кăтартнă результатсем тăрăх, малти виçĕ вырăна çаксем тухрĕç: 1-мĕш вырăнта – И. Осипова (Калайкасси шкулĕ), 2-мĕш вырăнта – Т. Александрова (Хорнуй ял тăрăхĕ), 3-мĕш вырăнта – Т. Майорова (Шомик шкулĕ). Юрий Александрович хăй те яланхи пекех чупăва хутшăнчĕ.

Мала тухнисем тĕрлĕ хаклă парнесемпе кубоксене, дипломсене тивĕçрĕç. Иккĕмĕш-виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнисене те грамотăсемпе хаклă парнесем парса чысларĕç. Ăмартăва ирттерес ĕçе спонсорсем те нумайăн хутшăнчĕç, тĕрлĕ номинацисем палăртса ăмăртакансене парнесем парса савăнтарчĕç. Çак ăмăртупа вара хĕллехи сезон та хупăнчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: районти шалти ĕçсен пайĕн команди кубок çĕнсе илчĕ.**

# «Хăравçă хоккейла вылямасть»

Муркашри физкультурăпа спорт комплексĕпе юнашар хоккей курупкине хута янă хыççăн нумай арçын ачан хоккейла выляс ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ! Тинех Муркашра та пăр çинче вăхăта усăллă ирттерме май пур вĕсен.

Иртнĕ эрне кун вара кунта районти хоккей чемпионачĕ те иртрĕ. Юнкă, Сыпай, Оринин тата Муркаш шкулĕсенче вĕренекен арçын ачасем хаваспах вăй виçрĕç. Вĕсен вăййисене сăнанă хыççăн «хăравçă хоккейла вылямасть» тенипе сăмахсăрах килĕшмелле пулчĕ. Районти хоккей федерацийĕн ертӳçи, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.И. Кожанов ăмăрту пуçламăшĕнче çамрăк хоккеистсене саламласа вĕсен йĕркеллĕ те çапăçусăр-хирĕçӳсĕр вăййине курма шанассине каларĕ. Ачасем тивĕçлĕ вăйă кăтартса çак сăмахсене тӳрре кăларчĕç те. «Сывлăх» ФСК директорĕ А.Н. Куликов районта чылай çул каялла пулнă ырă йăлана çак ачасен ăрăвĕ çĕнĕрен вăй парса малалла тăсни ырă тĕслĕх вырăнне пулĕ тесе калани те спортсменсене хавхалантарчĕ.

Юлашки çулсенче хоккей спортне аталантарас тесе район администрацийĕ, вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, хоккей федерацийĕ тăрăшни куçкĕрет. Апла пулман пулсан кăçал Сыпай тата Оринин шкулĕсенче вĕренекенсенчен тăракан районăн пĕрлештернĕ команди Элĕк районĕнче иртнĕ ăмăртăва тухмĕччĕ те.



Орининсем, сăмахран, хĕлĕпех пĕве çинчи пăра тасатса тренировкăсем ирттернĕ. Сыпайĕнчи пăр çинче вара кĕвви те янăрать, çутти те пур. Спортшăн çунакансемсĕр ку та пулман пулĕччĕ. Юнкăра акă хоккей курупкине официаллă шайрах уçни те нумай пулмасть-ха. Апла физкультура учителĕсем ачасене хавхалантарма пултарни курăнать. Район ăмăртăвне икĕ шкулăн директорĕсем те пыни вара – В.В. Дашков (Сыпай) тата В.Г. Федоров (Юнкă) – спортри ӳсĕмсем малашне мĕнле пулма пултарассине те палăртать пулĕ. Çав вăхăтрах Мăн Сĕнтĕр шкулĕн команди район ăмăртăвне тухманни шкула пĕрре те чыс кӳмерĕ. Районти пысăк шкулăн (вĕренекенĕсем те нумай!) хоккей курупки те пур ĕнтĕ. Апла сăлтавĕ мĕнре-ха?..

Ăмăрту вара çĕнтерӳçĕсĕр мар, паллах. Юнкă шкулĕн команди тивĕçрĕ ăна. В.И. Кожановран куçса çӳрекен кубок илсен вĕсем татах та хавасланчĕç. Иккĕмĕш вырăнта – Сыпайсем, виççĕмĕш вырăнта – Орининсем. Призлă вырăна тухнисене те, Муркаш шкулĕн командине та федераци ертӳçи тортсем парса хавхалантарчĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова хаклă парнесемпе дипломсем парса чысларĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Милици хроникинчен

# Васкакан... куçне хупнă

Москакасси ялĕ çывăхĕнче «Жигули» модельлĕ машинăпа пыракан Азербайджан республикин çынни тĕп çул çине тухнă чух питĕ пысăк йăнăш тунă: çав вăхăтра çулпа пыракан КамАЗ машинăна ирттерсе яман. Пысăк машина та, паллах, çав самантрах хăвăртлăхне чарма ĕлкĕреймен. Машинăсем çапăнаççĕ. Çăмăл машинăн водителĕ вырăнтах вилсе каять. Унăн пассажирне Шупашкарти больницăна леçеççĕ.

Федераллă трасса-и вăл е вырăнти пĕлтерĕшлĕ çул – яланах асăрханулла пулма манас марччĕ.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**ГИБДД пропаганда инспекторĕ.**

Ăмăрту

# Президент кубокĕ каллех Муркашсенче

Йĕлтĕрпе ăмăртассин республикăри финал ăмăртăвĕ шкул ачисен вун иккĕмĕш спартакиадин шучĕпе мартăн 11-мĕшĕнче Шупашкарта иртнĕ. Унта пирĕн районти çамрăк йĕлтĕрçĕсен команди мала тухса республика Президенчĕн кубокне çĕнсе илме пултарнă. Т. Иванова, К. Иванова, А. Костина, Д. Баранова, С. Васильев, А. Моисеев малти вырăнсене тухнă. Районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Ярапайкассинчи тата Калайкассинчи (тренерĕсем – Э. Гордеев, В. Моисеев тата А. Дашкова) уйрăмĕсен воспитанникĕсем виççĕмĕш çул кубока хăйсен аллинчен вĕçертмеççĕ.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

выдаем на выгодных условиях
**ЗАЙМЫ**
принимаем
**СБЕРЕЖЕНИЯ**
под достойные проценты
КПКГ "КАПИТАЛ"
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
работаем с пайщиками

**Продаем керамзитобетонные блоки от 26 руб. Весенние скидки. «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 5-5.**

**Продаю МТЗ-82.1. 1991 года выпуска, большая кабина, плуг. Тел.: 8-961-340-55-68.**

**Продаю 2 инвалидные коляски: новую в упаковке и б/у. Тел.: 8-903-389-61-41.**

**Сдаю в аренду земельную долю 1,42 га в д. Яраккасы у дороги Кадикасинского сельского поселения. Тел.: 8-906-382-03-94, 65-2-41. Егоров.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1175, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501, для сельскохозяйственного производства, площадью 8505 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Кадастровый инженер: ООО «Аршин» 429530 Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 5, телефон: 8(83541)63439. ОГРН: 1032136001413 в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:080501:ЗУ1, расположенного по адресу: ЧР, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Новая, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельного участка Корзова Александра Николаевича.**

**С проектом межевого плана можно ознакомиться по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 5. Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы состоится по вышеуказанному адресу 17 апреля 2010 г. в 10 час.**

**Смежный земельный участок, с правообладателем которого требуется согласование местоположения границ: Чурбанову Алексею Николаевичу при согласовании границ иметь документ, удостоверяющий личность, документы о правах на земельный участок.**

**Участница долевой собственности Цеперева Вера Геннадьевна, 16.10.1954 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Зеленая, д. 41, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Горького, д. 28 Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.**

**Участница долевой собственности Горшкова Велицата Федоровна, 29.10.1940 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, переулок Ветеранов, д. 131, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Горького, д. 28 Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.**

**Участница долевой собственности Дашкова Алевтина Александровна, 27.06.1939 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Центральная, д. 5, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Нива», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 1,22 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Горького, д. 28 Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.**

Муркашри тĕп больница администрацийĕпе профсоюз комитечĕ нумай çул хушши Катькасри врач амбулаторийĕнче водитель пулса ĕçленĕ Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ

**Герман Леонтьевич**
**РОМАНОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Пирĕн пата çыраççĕ

# Аннесене сума суса

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне пурте анлăн паллă турăмăр. Çакăн пирки редакцие килнĕ çырусенчен те аван курăнать. Акă **Шурча шкулĕнче вĕренекен Настя Федорова** хăйĕн хыпарĕпе шкулта иртнĕ «Чăваш пики – 2010» конкурс пирки пĕлтерет. Вăл хăй те тулли кăмăлпах çавăнта хутшăннă. Çĕнтерӳçĕ ятне вара Таня Тимофеева çĕнсе илнĕ.

Тепĕр çыру **Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçинчен В. Никитинаран** килчĕ. Вăл хăйсен ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен 6 команди спорт уявне чаплă ирттернине пĕлтерчĕ. Уяв умĕн иртнĕ ăмăртăва Раççей Геройĕ Е. Борисов, республикăри йĕлтĕр спорчĕн федерацийĕн ертӳçи А. Давыдов, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров тата кунти шкул директорĕ А. Степанова хутшăнса хĕрарăмсене саламланă. Командăсенчен Тивĕшсем мала тухнă.

**Тойкилтĕ шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ю.Н. Евстафьева** çыруннехи пĕрремĕш уява Мăн Токшик ялĕнче епле ирттернине çырса пĕлтерчĕ. Кунта та хĕрарăмсем спортпа туслă иккен. Вĕсем йĕлтĕрпе чупса ăмăртнă. Хĕрарăмсенчен чи маттурри Светлана Иванова, хĕрсенчен – Ирина Портнова пулнă. Арçынсем те ăмăртăва хутшăнса ырă тĕслĕх кăтартнă. Каçхине клубра «Айтăр-ха, хĕрсем!» конкурс та иртнĕ. «Тăванлăх» халăх фольклор ушкăнĕ илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарнă. Уявра Тойкилтĕ шкулĕнче вĕренекенсем те активлă хутшăннă.

**Чуманкасси ял тăрăхĕнчи** хĕрарăмсем канмалли кунсенче «Хаваслă стартра» вăй виçнĕ. «Малыш» ача сачĕн тата Чуманкасси шкулĕн командисем пĕр пек очкосем пухса мала тухнă. Ывăннине пăхмасăрах, савăк кăмăл-туйăмпа, волейболла выляма та хал çитернĕ вĕсем. Çав кун ял тăрăхĕнчи база Культура çуртĕнче Кашмашсем лартнă спектакль те вĕсемшĕн парне вырăннех пулнă.

Тепĕр çырăва **«Солнышко» ача садĕнчи Т. Николаева воспитатель** çырнă. Вăл та аннесен уявне юмахсенчи тĕрлĕ сăнарсемпе пĕрле, ташă-юрăпа паллă турăмăр тесе пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 16.03.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.